К Р1
С48
29059-чув

# Игорь полкӗ ҫинчен хунӑ юрӑ

Чӑваш кӗнеке издательстви

Р1
С48
К



# Игорь полкĕ çинчен хунă юрă



Юрий Сементер куçарнă

Элли Юрьев илемлетнĕ

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1985



Тăвансем, пуçлар-и эрлĕ юрă
Авалхи минетлĕ çаврăмпа
Игорь Святославич çарпала
Йывăр похода кайни çинчен!
Юррине Боян пек мар пуçласчĕ,
Хамăрла юрласчĕ, хальхилле!
Çав Боян чăн ăрăмçах-мĕн пулнă:
Екки янă вăхăчĕсенче
Шухăшĕпе йывăç тăрăх шунă,
Кашкăр евĕр чупнă уй-хирте,
Кăйкăр пек çӳле вĕçсе хăпарнă,
Елĕк-авалхи вăрçăсене
Вăл час-час аса илме юратнă.
Акăш кĕтĕвĕ çине вара
Ун пек чух вăл янă вунă кăйкăр:
Хăш шуракăш маларах лекет —
Çавăн юрă юрлама тивет.
Акăш Ярослав ятне мухтать-и
Е кассук кнеçне Редедьăна
Çарĕ умĕнчех чиксе пăрахнă
Мстислав ятне çĕклет çӳле,
Е чыслать Роман кервенлĕхне...
Çук, Боян шуракăш картине
Вунă кăйкăрпа тыткăнламан-мĕн:
Ăрăм чунлă вунă пӳрнипе
Вунă хĕлĕхе вăл ачашланă,
Хĕлĕхсем вара, хавхаланса,
Кнеçсене çĕн кĕвĕпе мухтанă.

Пуçлăпăр, атьсемĕр, хайлава
Улатимĕр вăхăчĕсенчен,
Çăмхана кустарăпăр хуллен
Хамăр Игорь кунĕсем патне.
Пĕлĕпĕр вăл шухă пуçĕпе,
Вĕри юнлă чунĕ-чĕрипе
Теветкеллĕ шут тытни çинчен,
Хăй пекех хастар дружинипе
Тăван çĕршĕн вăрçнисем çинчен,
Кăпчака тулланисем çинчен.



Тӳпене тӗсерӗ паттӑр Игорь —
Сар хӗвелӗн ҫут сӑнне курмарӗ.
Усала-ши е ырра: ун ҫарӗ
Палӑрмасть — сӗм-тӗттӗмпе хупланнӑ.
Хӑй дружинине калать ҫарпуҫӗ:
«Тӑвансемӗр! Тыткӑна лексе
Пуличчен усал тӑшман кулли
Пуҫ хурар ҫапӑҫӑва тухса.
Утланар-и ҫилҫунатсене,
Ҫул тытар-и кӑвак Дон енне!»
Парӑнать кнеҫ ӑсӗ туйӑма.
Аслӑ Дон шывне ӗҫес килни
Тӳпере хӗвел пытаннине те
Ҫӗнтерсех чӗнет ӑна мала.
«Сӑнӑпа,— тет,— эпӗ пӑталасшӑн
Половец уй-хирӗн чиккине
Е сирӗнпеле пуҫа хурасшӑн,
Е ҫак ылтӑн шлемӑмпа ӑсса
Тутанасшӑн аслӑ Дон шывне!»

Эй, Боян, аваллӑх шӑпчӑкӗ!
Халь пулсан, ҫав походсем ҫинчен
Мӗн тери эс хӳхӗм юрлаттӑн,
Ӗмӗт-шухӑш йывӑҫҫи ҫине
Шӑпчӑк кайӑк евӗр ларӑттӑн,
Вӗҫӗттӗн ӑсупала ҫӳлте,
Уй-хиртен сӑртсем-тусем таран
Троян ҫулӗпе ӗрӗхтерсе,
Хамӑр вӑхӑтӑн чапне кӳрсе.
Калӗччӗ ҫапла Велес мӑнукӗ,
Игоре мухтав юрри хывса:
«Тӑвӑл мар кӑйкӑрсене салатнӑ
Вӗҫсӗр ҫеҫенхир анлӑшӗпе,
Чана мар чакӑлтатма пикеннӗ
Шур ҫилхеллӗ Дон ҫыранӗнче».
Тен, эс ҫапларах сӑмах пуҫлаттӑн,
Арӑмҫӑ Боян, Велес мӑнукӗ:
«Кӗҫенет утсем Сула енче,
Кейӳре мухтавӗ янӑрать,
Ҫӗнхула кавалӗн ян сасси —
Путивльре полксем тапранасси».

Игорь савнӑ шӑллӗне кӗтет.
Всеволод ҫапла-мӗн евитлет:

«Игорь, асăмран тухми пиччем,
Эпир иккĕн — Святославичсем,
Йĕнерле çӳрен утусене,
Хам эп ĕнтĕ хатĕр тахçанах,
Халь тăратăп Курск çывăхĕнче,
Çарăм — паттăр халăх йăхĕнчен:
Кавал вăййипеле вăйланнă,
Тимĕр калпакĕпех çуралнă,
Çисе ӳснĕ сăнă вĕçĕпе,
Пит аван чухлать çулне-йĕрне,
Çырмине те çатрине пĕлет.
Уххисене туртса хытарнă,
Йĕннисене йĕпсем тултарнă,
Хир кашкăрĕсем пек ĕрĕхеççĕ,
Кнеçе — чапĕ, пире — чысĕ, теççĕ».



Пусрĕ ылтăн йăрана çине,
Уй-хир урлă вĕçрĕ Игорь кнеç.
Пӳлчĕ ун çулне хура хĕвел.
Каçхи тăвăл йынăшрĕ, ахлатрĕ,
Тĕлĕрен кайăксене вăратрĕ.
Тискер кайăк çухăрать хирте,
Авă див та йывăç тăрринче
Ахăрать хăрушă сассипе,
Систерет вăл çичĕют çĕрне,
Атăла та Пумура калать,
Сулана калать вăл, Сурăша,
Корсуне, унпа пĕрлех сана та,
Тмутараканьри чул катемпи!
Уй урлах, çулне-мĕнне пăхмасăр,
Половец чавтарчĕ Дон енне,
Аскăн акăшсен шăй-шай сасси пек
Çуйхашать пин урапа уйра.

Игорь çарĕ Дон патнехваскать.

Кайăксем ырă мара сисеççĕ,
Сывлăшра макраççĕ те хӳхлеççĕ,
Инкеке часрах килме васкатнăн
Çырмара выç кашкăрсем ӳлеççĕ,
Кăйкăрсем пур чĕрчуна чĕнеççĕ
Юн ĕçме те шăмă кăшлама,
Хĕрлĕ питлĕхсен тĕсне пăхса
Тилĕсем каçса кайса вĕреççĕ.

Вырăс çĕрĕ! Аслă вырăс çĕрĕ,
Тăрса юлтăн эс сăртсем хыçне!

Каç ытла хуллен килет-çке. Шуçăм
Сӳнтерет хăй çутине аран.
Майĕпен уйсем ак тĕттĕмленчĕç,







Шăпчăксем те путрĕçĕ ыйха.
Чанасем кăна шавла пуçларĕç.
Вырăссем уй тăрăх сапаланчĕç,
Хĕрлĕ питлĕх тытрĕç, хӳтлĕх турĕç,
Хăй пайти кашниншĕн пултăр терĕç;
Кнеçе — чапĕ, ыттине — сăвапĕ.

Эрнекун ирпе тулларĕç тăкрĕç
Половец йыттисене вĕсем.
Çĕмренсем пек таврана саланчĕç,
Тытса илчĕç сарпикисене,
Ылтăн-кĕмĕл япалисене,
Йăлтăр-йăлтăр аксамитсене
Хăпăл-хапăл пĕр çĕре пуçтарчĕç.
Урапа çинчи уртмисене,
Йăпăр-йăпăр юпăнчисене,
Хăнтăр тытнă кĕрĕкĕсене
Çĕрĕк шывлă симĕс шурлăха
Пăрахса таптарĕç те çул турĕç.
Кĕмĕл аврлă, эреш çырулă,
Кăвар пек çунса тăран çӳçеллĕ
Йăлтăрти хĕрлĕ элем вара —
Арăслан пек Святославичра.

Паттăр та вĕри Олег еткерĕ
Тĕлĕрет инçе-инçе уйра.
Çуралман вăл хăй ятне яма
Сан умра та, выçă куçлă кăйкăр,
Сан умра та, тăранми караппăл,
Урăх чунлă половец йытти...
Акă Гзак выç кашкăр пек юртать.
Умĕнче Кончак йăпăртатать,
Аслă Дон çулне вăл кăтартать.

Тепĕр кун, каç сĕмлĕхне сирсе,
Хĕрелсе килет юн тĕслĕ шуçăм.
Тинĕсре çил-тăвăл тапранать,
Вăл тăвата хĕвеле хупласшăн,
Аça-çиçĕм кисретет çĕре,
Вут чĕлхеллĕ çумăр çывхарать:
Çакăнта, Каяла хĕрринче,
Аслă Дон-аттемĕр патĕнче
Хуçăлĕç кĕç хурăç сăнăсем,
Çут хĕçсем чанклатĕç хĕмленсе,
Половец шлемĕсене лексе
Кĕç мăкалĕç çивчĕ хăртăсем...

Вырăс çĕрĕ! Аслă вырăс çĕрĕ,
Ентĕ юлнă эс сăрт-ту хыçне.

Тинĕсрен Стрипух мăнукĕсем —
Шух çилсем — çĕмрен пулса вĕçеççĕ



Паттăр Игорь çарĕ çинелле.
Таврара ахăрсаман пуçланчĕ,
Тăр шывсем те кайрĕç пăтранса,
Уйсене тусан килсе хупларĕ.
Половец элемĕ пĕлтерет:
Хиртексем Дон хĕрринчен килеççĕ,
Тинĕс патĕнчен те çĕкленеççĕ,
Игоре хупăрласа илеççĕ.
Çывхарать хăрушшăн пур енчен
Арçури ачи-пăчин сасси,
Вырăссем хăйсем тăран уя
Хӳтĕлерĕç хĕрлĕ питлĕхпе.

Вăкăр евĕр Всеволод! Тăратăн
Эсĕ паттăр йышупа малта.
Ухăпа пеме те ĕлкĕретĕн,
Çиçĕм çиçтеретĕн хĕçпеле!
Хăш енче кăна эс курăнмастăн
Йăлтăр-йăлтăр ылтăн шлемупа,
Тăшман пуçĕ ывтăнать çăмха пек.
Авар шлемĕ пайланать икке,
Всеволод, сан вăй-хăватупа.
Суранран хăрать-и, тăвансемĕр,
Чунĕпе хĕрсе çитсен этем?
Ĕнтĕ хăй çинчен пачах вăл маннă,
Маннă ырлăх-пурлăхне, ятне,
Йăлтăркка Чернигов престолне те,
Ытарми илемлĕ Глебовнин
Ырă йăлине те, йĕркине те.

Троян турă ĕмĕрĕ вĕçленнĕ,
Ярослав саманисем те иртнĕ.
Олег кнеç çĕр çĕмĕрсе çӳренĕ,
Вăл хĕçпе кăна хăйне çул уçнă,
Вырăсра вăл акнă хирĕçӳ,
Хăвăрт Тмутаракане çитсе
Пуснă ылтăн йăрана çине,
Çавна илтнĕ аслă Ярослав,
Улатимĕр, Всеволод ачи,
Всеволод ачи, Чернигов кнеçĕ
Ирсерен мăкланă хăлхине.
Вячеславăн ывăлĕ, Пурис,
Çĕн йĕрке тăвап тесе мухтаннă,
Олега малтан хур тунăран
Çамрăк, вăйпитти те хатăр кнеç
Хăй ем-ешĕл курăкпа хупланнă.
Çав Каяла шывĕ енченех
Святополк та вилнĕ ашшĕне
Венгр хушшипе илсе тухать,
Шĕкĕр Кейĕве çитсе, сăваплă
Сухви чиркĕвне вырнаçтарать.
Олег Гориславич ĕмринче
Хирĕçӳлĕх шăтнă, тымарланнă,
Пурнăçĕ Ташпух мăнукĕсен
Хаярланнă сив синкерлĕхпе,



Кнеç таврашĕ хирĕçнипелех
Пынă кĕскелсе этем ĕмри.
Вырăс уйĕнче сухаç сасси те
Илтĕнсех кайман вăл çулсенче,
Çăхансем ун чух кранклатнă ирĕк,
Туртăшса виле пайлавĕнче,
Чавкасем чараксăр чакăлтатнă
Сырăнса хирти ўте-пĕве.

Пулнă çавнашкал тахçан авал.
Хальхи пек çапăçава вара
Нихăçан никам курман-илтмен!
Мĕн иртен каçхи шуçăмччenех,
Мĕн каçран хĕвел тухиччenех
Сывлăшра вĕçеççĕ çĕмренçем,
Чанклатаççĕ шлемсемпе хĕççем,
Хуçăлаççĕ хурçă сăнăсем
Вырăссем пĕлмен уйра-хирте,
Половец çĕршывĕн варринче!
Кайнă тўрем çĕр шăтса-путса
Лашасем чавса пĕтернĕрен,
Шăмă-шакă — акнăпа пĕрех —
Юнпала выртать шăваранса...
Кĕç вăл шăтрĕ, Руç хуйхи пулса.

Мĕн сасси янрать, мĕскер шавлать,
Аякран ирех килет кунта?
Игорь çавăрасшăн полксене,
Хĕрхенет вăл хăйĕн шăллĕне.
Пĕр кун çапăçаççĕ, икĕ кун,
Виççĕмĕшĕнче, кăнтăрлапа,
Игорь ялавĕсем усăнчĕç.
Чăрсăр шыв — Каяла хĕрринче
Уйрăлчĕ ик ăрăссăр тăван.
Çитеймерĕ çав юн пек эрех,
Çакăнпа вĕçленчĕ сăйлану:
Чаплăн хăналанчĕç хăтасем,
Руçшăн пуçне хучĕç вырăссем.
Курăк тайăлать хурланнипе,
Йывăç усăнать эрленнипе.



Çитсе çапрĕç йывăр вăхăтсем
Тавлă-шавлă Ташпух таврашне.
Тухрĕç çиеле хир çыннисем.
Вырăс çĕрĕн хурлăхлă ўпкевĕ
Хĕрпике пулса пырса кĕрет
Троян турă çыннисен çĕрне,
Ярăнса çитсессĕн Дон хĕрне,
Икĕ шурă çунатне сулать,
Икĕ шурă çунатне сулать,



Ырӑ вӑхӑта вӑл хӑвалать.
Ҫапӑҫмаҫҫӗ тӑшманпа кнеҫсем,
Ма тесен калаҫҫӗ пӗр-пӗрне:
«Ак ку манӑн, ав тепри те — манӑн»,
Пӗр сумран юри ҫӗр сум туса
Калаҫҫӗ чӑкрашса кнеҫсем.
Тӑшмансем вара мӗнпур енчен
Ӗрӗхсе килеҫҫӗ те хатаррӑн
Хупӑрлаҫҫӗ вырӑс ҫӗршывне.

Инҫете-ҫке вӗҫрӗ вичкӗн кайкӑр,
Тӗрлӗ кайӑка хӑваласа.
Ӗнтӗ Игорӗн полкне чӗртеймӗн.
Карна та хӳхлев юрри юрларӗ,
Желя та сӑваплӑ вутпала
Тухса кайрӗ аслӑ Руҫ тавра.
Тӑлӑх арӑмсем куҫҫуль тӑкаҫҫӗ:
«Ӗнтӗ хамӑрӑн арҫынсене
Чӗререн чӗнсе те чӗртес ҫук,
Шухӑшпа та чун кӗртеес ҫук,
Куҫпала пӑхса та курас ҫук,
Алра ылтӑн-кӗмӗл тытас ҫук».

Инкекпе асапланать Кейӳ,
Пусмӑрти Чернигов йынӑшать,
Хурлӑх Руҫ ҫӗрӗпеле ҫӳрет;
Хурлӑх шывӗ ейӗве тухать
Аслӑ Руҫ ҫӗршывӗн варринче.
Кнеҫӗсем хӑйсен аллипелех
Хӑйсене куллен тӑваҫҫӗ сӑтӑр,
Ҫичютсем асар-писер ҫӳреҫҫӗ,
Килӗрен пӗрер пакша илеҫҫӗ.

Игорь, Всеволод — ик Святославич,
Ахалех хуйхатрӗҫ тӑшмана.
Святослав, Кейӳн мухтавлӑ кнеҫӗ,
Тин кӑна пусарнӑччӗ ӑна.
Хӑйӗн харсӑр полкӗсемпеле,
Йӑлтӑр-йӑлтӑр хӗҫӗсемпеле
Ҫитнӗччӗ вӑл половец хирне,
Ҫырмипе сӑртне танлаштаратчӗ,
Пӑтрататчӗ кӳллине-шывне,
Кирлӗ-тӗк — шурне те типӗтетчӗ.
Сӗмсӗр Кобяка — вӗсен ханне —
Тимӗр пӑта пек туртса кӑларчӗ,
Шӗкӗр Кейӗве тытса пырса
Илчӗ хӑй керменӗнче чунне.
Нимӗҫ, грек, венециан, мурав
Тав сана, тет, паттӑр Святослав.
Ӳпкелеҫҫӗ Игоре вӗсем,
Половецӑн шӑршлӑ шывӗнче
Хӑй ҫарне ахаль путарчӗ теҫҫӗ,
Руҫ ылтӑнӗпе Каялӑна
Ик енчен те ылтӑнларӗ теҫҫӗ,





Ылтăн йĕнерне сутса ярса,
Тыткăн йĕнерне туянчĕ теççĕ.
Пуçне усрĕç вырăс хулисем,
Иртсе кайрĕç ырă вăхăтсем.



Святослав пăтранчăк тĕлĕк курнă
Шĕкĕр Кейӳре, сăрт-ту çинче:
«Тĕксĕм тĕслĕ çивиттипеле
Витрĕç пек кĕçĕрхи каç мана
Хамăн йывăç вырăнăм çинче.
Кăвак хĕмлĕ эрехпе сăйлаççĕ,
Хурлăхпа пăтратнăскерпеле.
Половецсен пуш уртмахĕнчен
Йăлтăр ĕнчĕ ман çине сапаççĕ.
Ылтăн çиллĕ çуртăм тăрринчи
Урхамах-эреш таçта çухалнă,
Плеçнĕ патĕнчи çерем çинче,
Сăрт енче, Киянь вăрманĕнче,
Çĕрĕпех хура çăхан кранклатрĕ,
Вĕçрĕ тинĕс еннелле унтан».
Хуравлаççĕ паярсем кнеçе:
«Сан ăсна инкек-мĕн тыткăнланă!
Ку вăл — икĕ кăйкăр, икĕ паттăр
Тмутаракане илес тесе,
Дон шывне ĕçсе пăхас тесе
Ашшĕн ылтăн килĕнчен вĕçни.
Половец пăхăнтарма памарĕ,
Хăйсене серепене çаклатрĕ».



Виççĕмĕш кунне тĕнче хупланчĕ,
Тĕксĕмленчĕ ик хĕвел, хуралчĕ,
Ик хĕрлĕ юпа сӳнсе çухалчĕ,
Святославпала Олег — ик уйăх —
Ячĕсем те тĕттĕме пытанчĕç.
Килсе кĕчĕ половец эшкерĕ,
Ухтарма пусларĕ Руç çĕрне.
Ырлăха усал килсе хупларĕ,
Ирĕке инкек-синкек туптарĕ,
Явăнса çӳрет хура çăхан.
Ют хĕрсем таçта вылясçĕ вăйă,
Шукăлленнĕ пирĕн ылтăнпа,
Юрринче Бус вăхăтне мухтаççĕ,
Шаруканшăн тавăрма чĕнеççĕ...
Савăк кулă тарчĕ пирĕнтен,
Хура хурлăх çавăрчĕ йăва.
Святослав вара çапла минетлĕн
Тавăрса калать паярсене
Хăйĕн йӳç куççульпеле ислетнĕ,
Ылтăнланă ăслă сăмахне:
«Всеволодпа Игорь — ачамсем!
Тухрăр çулăра мехел çитмесĕр,



Аслă вырăс çĕрĕ пиллемесĕр.
Мелсĕр çыхланса усалпала,
Ятшăн çеç юхтартăр ун юнне,
Хурçă вичкĕнлетнĕ чĕрĕрсем
Чысшăн-чапшăн çунчĕç курăнать,
Ĕнтĕ мĕн кăтартрăр, ачамсем,
Манăн кĕмĕл витнĕ çÿçĕме?
Эх, ăçта эс, Ярослав тăванăм?
Парăнми Чернигов çарĕпе —
Паярпа, татран çыннисемпе,
Вайпутпа тата шелпирсемпе,
Пуç усма пĕлмен улпирсемпе,
Çапăçма ăста ревуксемпе,
Çĕнтерме ăста тăпчаксемпе
Питлĕхсемсĕр, атă çĕççипех
Хăрататтăн пĕтĕм хураха,
Чĕтрететтĕн пĕтĕм тăшмана.
Аттесен, асаттесен мухтавĕ
Аслатин тăратчĕ кĕрлесе.
Эсĕр пур — тапрантăр çăмăлçаххăн,
Чапшăн çунтăр — намăса çеç юлтăр.
Ватă çын чĕри те çамрăкланĕ,
Паттăр кăйкăр хăйĕн йăвине
Хÿтĕленине пĕрре курсан.
Тĕк кăна вĕçет ыттисенчен!
Эп те сăнă тытăттăм алла,
Çук-çке пулăшас текен кнеçсем.
Килсе çапрĕç йывăр вăхăтсем:
Римовра та — половец хĕççи.
Йывăр сусăрланнă Улатимĕр
Йынăшса та ахлатса выртать!»
Всеволод! Мухтавлă, аслă кнеç,
Ма килместĕн инçетрен вĕçсе?
Е аçун сăваплă кил-суртне
Тустарин тăшман тесе тăран?
Сан вăйпа халь Атăлăн шывне
Кĕсменпе сапса енчен енне
Тип çырма туса хăвармалла,
Кăвак Донăн шухă юхăмне
Шлемпала ăсса типĕтмелле!
Хăв пулсан, тата хăвпа пĕрле
Глебăн икĕ ывăлне илсен
Тăтăр-и чăтса кăпчак твраш?
Эс килсе пулăшăва тухсан,
Çичĕютсене парăнтарсан,
Чура хакĕ юлĕччĕ йÿне.

Икĕ паттăр, Рюрикпе Давыд,
Сирĕн ылтăн шлемлă çарăр мар-и
Паттăррăн ишетчĕ ют юнра?
Сирĕн парăнми дружинăр мар-и
Харсăр вăкăр евĕр мĕкĕрсе
Пуç хурать ют хĕç вылянипе?
Йĕнерлер-и урхамахсене
Тĕрĕслĕх кунне тавăрассишĕн,
Çĕр-аннешĕн, Игорь тăкнă юншăн!



Çивчĕ Ярослав, Галици кнеçĕ!
Сăлăп ятăм Карпата тесе,
Дунай хапхи хупă-ха тесе
Престолу çинче шăпах ларатним?
Аслати, сан патăнтан тухса,
Таврари çĕрсем çине каять,
Кейĕве те алăк уçтарать,
Пĕлĕтрен те парăм пуçтарать!
Эс султаншăн çĕмренсем яратăн,
Яр Кончак çине те паянтан,
Тавăр çак ылханлă хураха
Хамăр Руçшăн, Игорь тăкнă юншăн!

Мстиславпала Роман! Сире
Харсăр ăс чĕнсен çапăçăва,
Кăйкăр пек, патвар çунатпалан
Çапнă тĕрлĕ кайăка ялан.
Тимĕрленĕ кăкăр — çĕнтерÿллĕ,
Латин шлемĕ — ылтăнăн çиçет,
Утнăçем çул-йĕрĕр ăнăçать.
Умăрта литван вĕсмен-и сăсăл,
Çаврăнман-и каялла етвек,
Чĕтресе ÿкмен-и деремел,
Сире мар-и половец пуç тайнă?
Халь, ав, сÿнчĕ Игорĕн хĕвелĕ,
Ырра мар чĕр çулçă тăкăнать!
Сулапа Роç шывĕсем çинче
Половец хуласене пайлать!
Тек чĕртеймĕн Игорĕн çарне.
Йыхăрать, чĕнет пире халь Дон.
Кнеçĕмсем, алла çут хĕç тытсамăр,
Тухăр çĕршыва хÿтĕлеме!

Ингвар, Всеволод! Ăçта çÿретĕр?
Мстиславичсем! Эсир ăçта?
Шăтăк йăвара хисепсĕр ÿснĕ
Ăмăрткайăк мар-тăр-çке эсир?
Мĕншĕн-ха ĕçпе илмесĕр тивĕç
Валеçсе пĕтертĕр çĕрсене?
Ăçтарах халь ылтăн шлемăрсем,
Питлĕхсем, поляк çĕмренĕсем?
Хÿтлĕхе илсемĕр çĕршыва,
Шĕвĕр, çивчĕ сăнăрсемпелен
Çĕкленсемĕр çапăçма, кнеçсемĕр,
Руç-аннешĕн, Игорь тăкнă юншăн!

Сула шывĕ кĕмĕллĕн юхмасть
Халь Переяславль хули патне.
Çичĕют килсе пăтратнăран
Двина хумĕ те курнать хуран.
Ярса илчĕ Изяслав хĕсне,
Тухрĕ çапăçмашкăн литвапа,
Çĕнеймерĕ тăшмана пĕччен,
Несĕлсен ятне çĕре ÿкерчĕ,
Юнĕпе хĕретрĕ курăка.



Ик кăвак куçне хупас чухне
Хăйне хăй ÿпкелесе каларĕ:
«Ларчĕ утланса хура çăхан,
Кнеçĕм, санăн дружину çине,
Ĕçрĕ кашкăр ун таса юнне».
Хăйĕн икĕ тăванне кĕтмесĕр —
Всеволодсăр, хÿхĕм Брачиславсăр —
Пĕчченех тухса тытăçава
Изяслав çухатрĕ-çке пуçне,
Хупрĕ ик сенкер кăвак куçне,
Ĕнчĕ витĕр, ылтăн шăрça витĕр
Тÿпене вĕçтерчĕ яш чунне!
Таврара шăпланчĕ вăйă-кулă,
Хурлăхлăн янрать кавал хÿхлевĕ...

Ярослав, Всеслав мăнукĕсем!
Усăнтарăрах ялавăра,
Хĕçсене йĕнĕрсене чиксемĕр;
Тивĕç мар эсир ăру чапне!
Ятăра та чысăра çухатрăр,
Хураха килсе кĕме çул патăр,
Çичĕютăн мăшкăлне кăтартрăр
Руç çĕрне, Всеслав пуянлăхне,
Сирĕнте пĕр кăмăл пулманнишĕн
Халь тÿсетпĕр пусмăр тăшманран.

Троян ĕмĕрĕ иртес чухне
Ярса пăхнă-мĕн шăпа Всеслав,
Кам-ши пулĕ савнă хĕр тесе.
Кейĕве иккен çаксикер ăмсаннă.
Утланса чеелĕх урхамахĕ,
Хайхискер çитет çитес çĕре,
Ылтăн сăнăн аврипе кăна
Перĕнет кнеç ларнă вырăна,
Çур çĕрте вăл тискер кайăк пек
Шурăхуларан тапса сикет.
Каç сĕмне çилхе пек вĕçтерсе,
Ирпеле Çĕнхулана çитет,
Кăвак çут ăна телей кÿрет,
Хапхана вăл çĕмĕрсе кĕрет,
Ирĕк чунлă Ярослав чысне
Ÿкерсе чÿлмек пек çĕмĕрет,
Çиййĕнчех Дудутка патĕнчен
Вăл Немига шывĕ еннелле
Урнă кашкăр пек сиксе ÿкет.

Кĕлте мар-мĕн вăл енче сараççĕ,
Этем пуçĕ ывтăнса тăрать.
Хурçă çапуççипеле çапаççĕ,
Вăйлă çил килет те — сăвăраççĕ,
Çын чунне кĕлеткинчен уйраççĕ.
Юнăхнă Немига çыранне
Акăнчĕ шур вăрлăх вырăнне
Вырăс ачисен шăмми-шакки.



29059-чув
Республиканская
БИБЛ ТЕКА
им. М. Горького







Всеслав кнеҫ ялан ҫынна суд тунă,
Кнеҫ таврашшĕн хуласем парттарнă,
Хăй ҫĕрле чăн кашкăр пек ҫӳренĕ:
Автансем пĕрре авăтиччен
Кейӳрен Тмутаракане ҫитейнĕ,
Аслă Хорсăн мăн ҫулне татайнă,
Полоцкри ирхи чан сассине
Вăл Кейӳ ытамĕнче итленĕ.
Ăрăм чунлă, пиҫĕ ӳтлĕ-пӳллĕ
Ҫак этем те сахал мар шар курнă.
Ахаль мар-тăр ун ҫинчен Боян,
Ăслăскер, ҫапла-мĕн такмакланă:
«Вăйлă-и, ҫунатлă-и, чее-и,—
Эс иртеймĕн аслă турăран».

Йынăшать, хӳхлет халь вырăс ҫĕрĕ
Иртнĕ вăхăта аса илсе,
Паттăр кнеҫсене аса илсе!
Мĕн тăвас-ха: ватă Улатимĕр
Пурăнаймĕ ĕнтĕ икĕ ĕмĕр,
Халĕ урăх элемсем ҫĕкленчĕҫ:
Рюрикĕн — пĕри, тепри — Давыдăн,
Вĕлкĕшет кашнийĕ уйрăм-суйрăм.
Сăннисем те уйрăммăн юрлаҫҫĕ.



Аякра, Дунай ҫыранĕнче,
Ярославнăн хурлăхлă сасси
Илтĕнет ирхи куккук сасси пек:
«Дунай тăрăх кайăк пек вĕҫем,— тет,—
Пурҫăнах кĕпемĕн ҫаннине
Йĕпетсе Каяла шывĕнче
Кнеҫĕмĕн кĕрнек ӳт-пĕвĕнчи
Юнлă суранне шăлса илем».

Ярославна ир-ирех хӳхлет
Путивльре, хурал хӳми ҫинче...
«Ҫилĕм, ҫил! Ма хирĕҫех вĕретĕн!
Мĕншĕн эсĕ хин йĕпписене
Хăвăн ҫăмăл ҫунатусемпе
Вĕҫтеретĕн манăн савнă ҫыннăн
Ăраскалсăр ҫарĕ ҫинелле?
Е ҫӳл тӳпери пĕлĕтсене,
Тинĕсри капмар карапсене
Хӳтерни ҫитмест-им-ха сана?
Мĕншĕн ҫеҫенхир кăлканĕ тăрăх
Сапаларăн савăнăҫăма?»

Ярославна ир-ирех хӳхлет
Путивльре, хурал хӳми ҫинче:



«Днепр-Славутич, пиллĕхлĕ Славутич!
Чуллă сăртсем витĕр, тусем витĕр
Половец çĕрне те уямасăр
Хывнă эсĕ çул хăвна валли,
Святослав киммисене сиктернĕ,
Кобяк-хан патне илсе çитернĕ...
Манăн çыннăма илсе килсем!
Çамрăклах таса куççулĕме
Ярас марччĕ тинĕс еннелле».

Ярославна ир-ирех хӳхлет
Путивльре, хула карти çинче:
«Çутăран та çутăрах хĕвелĕм,
Ăшăран та ăшăрах хĕвелĕм,
Санăн пилӳпе тĕнче телейлĕ,
Каласамччĕ, ытарми хĕвелĕм,
Мĕншĕн-ха вĕри пайăркупа
Эс çунтартăн вырăссен çарне,
Пĕçертсе мăкатрăн ун хĕçне,
Аврăн хутăн ухă йĕппине,
Хĕн-асап тултартăн йĕннине?»



Кăвак тинĕс кайрĕ тулхăрса
Çур çĕр тĕлĕнче, хумсем вăранчĕç,
Тăвăл айĕн-çийĕн çаврăнать.
Турă хăй çул кăтартса пырать
Тыткăнран тухмашкăн Игоре,
Тыткăнран тухма, киле çитме,
Ашшĕн чаплă престолне ларма.

Кăçхи шуçăм сӳнчĕ майĕпен.
Тĕлĕрет те Игорь, тĕлĕрмест те,
Игорь вĕççĕр шухăш шухăшлать,
Шухăшпа çеçенхире виçет,
Аслă Донран кĕçĕн Донеца
Емĕчĕпеле çитсе ӳкет.
Сыхă Овлур çур çĕр тĕлĕнче
Шăхăрать утне шыв леш енче.
Игоре-мĕн Овлур йыхăрать,
Çăлăнса тухар, тет, тыткăнран.
Кăшкăрчĕ темскер, шăв-шав çĕклерĕ,
Тăпăр-тăпăр пур тавра ташлать,
Кăлкан курăк пуç тайса кашлать.
Хыпăнса ӳкет кĕçех хурал.
Юс пек сикрĕ кнеç хăмăшлăха,
Кăвакал пек чăмрĕ вăл шыва,
Çĕмренле вĕçтерчĕ учĕпе,
Кашкăр евĕр сикрĕ ун çинчен.
Чупса çитрĕ Донец хĕррине,
Кăйкăр пек çĕкленчĕ тӳпене,
Кăнтăрла та, ир те каç çимелĕх



Кайăк хур та кăвакал тытаслăн
Игорь ăмăрткайăк пек вĕçет.
Çивчĕ Овлур кашкăр пек сикет,
Çутă сывлăм шăпăр тăканать.
Тăрса юлчĕç урхамахĕсем,
Вĕриленнĕ-пăшăхнăскерсем.

Туç тайса каларĕ Донец шывĕ:
«Игорь кнеç, сăвап та сум сана,
Кончака — картланчăк кар аври,
Руç çĕрне — савăнăçпа хаваслăх».

Игорь кнеç çапла калать шыва:
«Сан та пĕчĕк мар чысу, Донецăм,—
Хумупа мана эс çупăрларăн,
Çывăрмашкăн курăк вырăн сартăн
Ылтăн-кĕмĕл çыранусенче,
Ăшă тĕтрепе мана чĕркерĕн,
Пиелерĕн ешĕл çулçăпа,
Сисĕмлĕ шыв кайăкĕ пекех,
Усалран та тĕселрен упрарăн
Хум çинче те чăрсăр çил çинче.
Стугна шывĕ сан пек мар пачах:
Тура чĕлтĕр-чĕлтĕр ăшăхскер,
Пĕчĕк шывсене çăта-çăта,
Анатра тулса та сарăлса
Туртрĕ кĕчĕ Ростислав кнеçе,
Сылăхсăр, сăваплă чĕрене.
Тĕксĕм Днепр хĕрринче, лере,
Амăшĕ тăкать вĕри куççуль,
Чечексем те шанчĕç хуйхăпа,
Йывăççем пуçĕсене усаççĕ...»

Чим! Мĕскер калать унта чакак?
Çук! Хыçран килет Гзакпа Кончак!
Паçăр çăхансем кăранклатмастчĕç,
Чавкапа чакак та сас памастчĕç,
Хир çĕленĕсем кăна шăватчĕç,
Улатаккасем, такка-такка,
Игоре çул кăтартса пыраççĕ,
Шăпчăксем хавас юрра яраççĕ,
Кун килни çинчен хыпар тăваççĕ.

Гзакĕ Кончакне сăмах хушать:
«Кăйкăрĕ вĕçерĕнчех пулсан —
Чĕппине çавах алран ямастпăр,
Ылтăн йĕпсемпе чунне илетпĕр».

Акă мĕн калать Кончак Гзака:
«Кăйкăр йăвине вĕçин вĕçет,
Чĕппине вĕçертмĕпĕр çавах,
Сыхăпăр ăна чипер хĕрпе».

Гзакӗ Кончака ҫапла калать:
«Хамӑр пикене ӑна парсассӑн,
Кӑйкӑр чӗппине те асӑрхаймӑн,
Шукӑль пикӳне те тек кураймӑн,
Тӗрлӗ кайӑк тапӑнӗ вара
Половец пурӑнакан хире».

Святославпала Ярослава
Е Олег ҫӗнтерӗвӗсене
Мухтакан Ходынӑпа Боян
Хӑй вӑхӑтӗнче ҫапла каланӑ:
«Йывӑр ҫав пуҫа ик хулпуҫҫисӗр,
Ҫын кӗлеткине те пуҫсӑр йывӑр».
Игорьсӗр, шӑпа пилленӗ кнеҫсӗр,
Кансӗр пулнӑ вырӑссен ҫӗрне.

Тӳпере йӑлтӑртатать хӗвел,
Ентӗ Игорь — вырӑс ҫӗрӗнче.
Сар хӗрсем Дунай хӗрне тухаҫҫӗ,
Савӑнӑҫлӑ юрӑсем юрлаҫҫӗ,
Вӗсемех юрланӑ юрӑсем
Тинӗс урлӑ Кейӗве ҫитеҫҫӗ.
Игорь улӑхать Боричева
Пуҫ таймашкӑн Пирогощӑна,
Тасаран таса тур амӑшне.
Хулара-ялта — вылять хаваслӑх!

Аслӑ кнеҫсене мухтанӑҫем
Ҫамрӑккисене те хӑвармаҫҫӗ:

Игорь Святославича — мухтав,
Хир вӑкри Всеволода — мухтав!
Игорь Улатимӗрне — мухтав!»

Ырлӑх-сывлӑх пултӑр, ҫар, сана,
Христиан чысне упракана!

Кнеҫсене мухтав, дружинӑна!
Аминь!

Вӗҫӗ

# КĔСКЕН ĂНЛАНТАРНИ:

**Игорь Святославович** — Новгород-Северски кнеçĕ (1151—1202), кунта вăл 1185 çулта половецсемпе çапăçни çинчен сăмах пырать.

**Боян** — Авалхи Руçри чаплă сăвăç.

**Ярослав, Мстислав, Раман, Всеволод, Олег, Святослав, Изяслав, Всеслав, Брячислав, Вячеслав, Борис, Глеб, Рюрик, Давыд, Ингвар, Святополк, Улатимĕр** — Авалхи Руç кнеçĕсем.

**Игорь Улатимĕрĕ** — Игорь кнеçĕн тыткăна лекнĕ ывăлĕ.

**Шелпирсем, улпирсем, татрансем, ревуксем, тăпчаксем** —çапăçса чапа тухнă çар çыннисем, паттăрсем. Калăпăр, **улпир** сăмах тĕпне тĕпчевçĕсем чăваш чĕлхинчи **улăп** сăмахра шыраççĕ.

**Венецнан, мурав, кассук, авар, етвек, деремел, хин** — халăхсемпе йăхсем.

**Половецсем** (кăпчаксем) — çеçенхирте кусса çӳренĕ тĕрĕк чĕлхиллĕ халăх. Кайран вĕсене тутар-монголсем аркатса тăкнă.

**Гзак, Кончак, Кобяк, Шарукан** — половецсен ханĕсем.

**Троян, Хорс, Стрипух, Велес, Ташпух** — авалхи вырăс язычникĕсен туррисем.

**Карна, Желя** — çав вăхăтри хуйхăпа хӳхлев символĕсем.

**Пумур, Поморье** — Азовпа Хура тинĕссен хĕрри.

**Уртма** — кӳме çивиттийĕ.

**Сула, Стугна** — юханшывсем, Днепр юпписем.

**Сурăш, Сурож** — хула ячĕ, хальхи Судак.

**Тмутаракань** — хула ячĕ. Вунпĕрмĕш ĕмĕрте вăл Руçе пăхăннă, ăна Чернигов кнеçĕсем тытса тăнă.

**Бус** — антсен (хĕвелтухăç славянсен) тăваттăмĕш ĕмĕрти кнеçĕ.

**Шурăхула** — Белгород.

**Çĕнхула** — Новгород-Северский.

**Овлур** — Игоре тыткăнран тарма пулăшнă половец.

**Боричев** — Кейӳри урам.

**Пирогоща** — чиркӳ ячĕ.


*Для старшего школьного возраста*

СЛОВО О ПОЛКУ ИГОРЕВЕ

**На чувашском языке**

**Перевод Ю. С. Семендера**

**Редактор П. Е. Димитриев**
**Художник и художественный редактор Э. М. Юрьев**
**Технический редактор Г. С. Самсонова**
**Корректор Л. К. Егорова**

Сдано в набор 5.08.85. Подписано в печать 15.10.85. Формат 70×108¹/₁₆. Бумага офсетная № 1. Гарнитура академическая. Печать офсетная. Усл. печ. л. 2,10. Усл. кр.-отт. 5,25. Уч.-изд. л. 2,18. Тираж 3000 экз. Заказ № 3136. Изд. № 70.
Цена 10 коп.

Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, Чебоксары, Канашское шоссе, 15.